27-мĕш çуă тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
17
ЮНКУН
11(6762) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **ЖУКОВА**
Фронт штабĕн начальникне
генерал-полковника **МАЛИНИНА**

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем январĕн 14-мĕшĕнче ВАРШАВАРАН кăнтăртарахра ВИСЛА шывĕн хĕвеланăç хĕррипе плацдармра наступлени пуçласа янă та, артиллери вăйлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, çанталăк начар тăнă пирки авиацине усă курма май пулманнине пăхмасăрах, тăшманăн вăйлă та шалалла инçе каякан оборонине татнă.

Виçĕ кун хушши малалла тапăнса пырса, икĕ плацдармра наступлени туса пыракан çарсем пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ те 60 километра çити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна 120 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсен оборонин ВАРКА, ГРУИЕЦ, КОЗЕНИЦЕ, СОЛЕЦ, ЗВОЛЕНЬ, БЯЛОБЖЕГИ, ЕДЛИНОК, ИЛЖА ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 1.300 пункта ытла йышăннă.

Нимĕçсен оборонине татнă чухне çаксем чапа тухнă: КОЛПАКЧИ генерал-полковникăн, ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, БЕРЗАРИН генерал-лейтенантăн, ЦВЕТАЕВ генерал-полковникăн, БЕЛОВ генерал-полковникăн, ВЛАДИМИРСКИЙ генерал-майорăн, БЕЛЯВСКИЙ генерал-майорăн, КУЩЕВ генерал-майорăн, ОРЛЕАНСКИЙ генерал-майорăн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантăн, ГРИГОРЬЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ВОЛКОВ генерал-лейтенантăн, БАРИНОВ генерал-майорăн, РЫЖОВ генерал-лейтенантăн, ШЕМЕНКОВ генерал-майорăн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантăн, РОСЛЫЙ генерал-майорăн, ЖЕРЕБИН генерал-майорăн, ФИРСОВ генерал-майорăн, ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн, ДОБРОВОЛЬСКИЙ генерал-майорăн, ТЕРЕШКОВ генерал-майорăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорĕн КОРОБЧЕНКАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ПОЖАРСКИН, артиллери генерал-майорĕн КОСЕНКАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БОДРОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЕГОРОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ИГНАТОВАН, артиллери генерал-майорĕн РОЖАНОВИЧАН, ЗЕРНОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн СНЕГУРОВАН, артиллери генерал-майорĕн КУРКОВСКИН, ФАНТАЛОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ЗРАЖЕВСКИН, артиллери генерал-майорĕн БРЮХАНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДОВСКИН артиллеристчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛАН, танковăй çарсен генерл-майорĕн ЮЩУКАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КИРИЧЕНКАН танкистчĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ПРОШЛЯКОВАН, ЧЕВЫЧЕЛОВ полковникăн, РУЙ полковникăн, КУЗНЕЦОВ подполковникăн, РАПОПОРТ полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКАН, МАКАРОВ полковникăн, ЧЕРКАСОВ полковникăн, ФАЛИН полковникăн, МАКСИМОВ инженер-полковникăн, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн ЛИТВИНЕНКАН связистчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен оборонине татнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене орденсемпе награда лама тăратас.

Паян, январĕн 16-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăшăн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 16-мĕшĕ,
№ 221.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **ЖУКОВА**
Фронт штабĕн начальникне
генерал-полковника **МАЛИНИНА**

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, вирлĕн наступлени туса пырса, авиаци пулăшса пынипе, паян, январĕн 16-мĕшĕнче, 20 сехетре Польшăн промышленность центрĕ пулса тăракан РАДОМ хулине—çулăрсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ пунктне—штурмласа тытса илнĕ.

РАДОМ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: КОЛПАКЧИ генерал-полковникăн, БАРИНОВ генерал-майорăн, АСКАЛЕПОВ генерал-майорăн, ГРИГОРЬЕВСКИЙ генерал-майорăн, СТЕНИН генерал-майорăн, МУХИН генерал-майорăн, ШУЛЬГА генерал-майорăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ТИХОНЧУКАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮВЧУКАН, КОНСТАНТИНОВ полковникăн, ЗАРИКОВ полковникăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн, ЖАРОВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КИРИЧЕНКАН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, ШЕМЯКИН полковникăн, ДЫВЧЕНКО подполковникăн, НИКУЛИН подполковникăн, БАРДЮКОВ подполковникăн танкистчĕсем; артиллери генерал-майорĕн КОРОБЧЕНКАН, артиллери генерал-майорĕн КУРКОВСКИН, ПИЛИПЕНКО полковникăн, ВЕРЖИКОВСКИЙ полковникăн, ЗНАЧЕНКО полковникăн, ЗАБЕЛЛО полковникăн, ЕФИМОВ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, ЗАХАРОВ полковникăн, ЛИСОГУРСКИЙ подполковникăн, ИВАНОВ подполковникăн, СОЛОДИЛОВ подполковникăн, ДОВГУН подполковникăн, КОТЛЯРОВСКИЙ подполковникăн артиллеристчĕсем; авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорĕн СИНДНЕВАН, СМИРНОВ полковникăн, КОВАЛЕВ полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, ЧИРВА полковникăн летчикĕсем; техника ллă çарсен генерал-майорĕн ШАПИРАН, РАПОПОРТ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн саперĕсем; МАКАРОВ полковникăн, КОЛОКОЛЬЦЕВ полковникăн связистчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РАДОМ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «РАДОМСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда лама тăратас.

Паян, январĕн 16-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, РАДОМ хулине тытса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, РАДОМ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 16-мĕшĕ.
№ 222.

ПЕНЗАПА ТАМБОВ ОБЛАÇЕСЕНЧЕ ГАЗ ВЫРАНĔСЕНЕ ТĔПЧЕНИ

Кăçалхи çуркуннепе çулла Саратовпа Мускав хушшинчи газопровода тăвас тĕлĕшпе пыракан ĕçсемпе паралех çав газопровод районĕ сывăхĕнче çĕнĕрен газ выранĕсем шырама пуçламалла.

Юлашки çулсенче пулнă тĕпчев ĕçĕсем Пензăпа Тамбов облаçĕнче çĕр сийĕсем Саратов облаçĕнчи газ выранĕнчи çĕр сийĕсем евĕрлĕ пулнине палăртнă. Унта разведка тăвас шутпа темиçе шăтăк чавма шутланă. Шăтăксене 5.000 метр таран чавмалла. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступленя туса пырса, январĕн 15-мĕшĕнче Польшăн администрацине хуçалăхăн пысăк центрĕ пулса тăракан КЕЛЬЦЕ хулине—çулсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ЕНДЖЕЮВ, ЗОДЗИСЛАВ, ДЗЯЛОШИЦЕ хулисем, ДАЛЕШИЦЕ, НЕСТАХУВ, РАДЛИН, ЗАГУЖЕ ДЫМИНЫ, БИЛЬЧА ПОДГУЖЕ ТОКАРНЯ, ЗЛОТНИКИ, КОЗЛУВ, ВЕНГЛЕШИН, ПОПОВИЦЕ, ТШЦЕНЕЦ, ЛЕШНО, КРЕНЖОЛЫ, ГЛОГОВЯНЫ, СЛАБОШУВ, КОСЬЦЕЮВ, СКАЛЬМЕЖ, ПАЛЕЧНИЦА, КАЗИМЕЖА-ВЕЛЬКА ятлă пысăк ялсем тата ПОТОК, СКАЛЬМЕЖ, КАЗИМЕЖА-ВЕЛЬКА чугун çул станцийĕсем.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирĕн çарсем ЛУЧЕНЕЦ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, ЛИЦИНЦЕ, ЦЕМЕРСКЕ ЛЕВЕРЕ, ПУЛИНА, СКЕРЕШОВО, ВЫШНИЕ ВАЛИЦЕ, НИЖНИЕ ВАЛИЦЕ, УЗОВСКА ПАНИТА, БАЛОГ, МЕЛЕХЕДЬ, ДРЕВНИЦЕ, СЛОВАЦКИЕ ЗАГОРАНЫ, ТЗЕРЬЯКОВЦЕ ялĕсене туртса илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ нимĕçсемпе венгерсен группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, икĕ чĕлхе номер çар госпитальне, саперсен тата железнодорожниксен казармисене, çарсен апат-çимĕç склачĕсене, товар станцине, хĕвеланăç вокзалне, Вараш театрне, тĕп телеграфпа, табак фабрикине туртса илнĕ, пĕтĕмпе 160 квартал ытла йышăннă. Январĕн 14-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 4.790 салтакĕпе офицерне тытăпа илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çүренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнлур фронтсенче нимĕçсен 137 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитчăй артиллеристсем тăшманăн 60 самолетне ытла персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çав тери хăвăрт наступлени туса пынă. Кельце хулинчен кăнтăртарахри вăрмансенче кĕрешекен совет чăçĕсене нимĕçсем хăяррăн хирĕç тăнă. Тăшман хăйĕн çарĕсене тата тепĕр танковăй дивизи парса вăйлатнă, контратакăсем нумай тунă. Гитлеровецсем тем пулсан та Кельце хулине хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшнă. Тăшмана хĕстерсе пырса, пирĕн çарсем ăна Чарна Нила шывĕн леш енне хăваласа янă. Унтан сонет чăçĕсем Чарна Нида шывĕ урлă каçса кайнă та тăшманпа Кельце хулине пырса кĕмелли вырăнсенче çапăçма тытăннă. Нимĕçсем ку хуларан хăватлă крепость туса хунă. Çурçĕр тата кăнтăр енчен Кельце хулине çӳллĕ вырăнсем тĕлесе тăнăçĕ. хĕвелтухăç тата хĕвеланăç енче шывсем юхса выртаççĕ. Çав чăрмавсемпе пĕтĕмĕшпех усă курса, нимĕçсем унта нумай вăхăтлăха пымалли хӳтлĕхсем туса тултарнă. Хула тавра нимĕçсем çын тарăйăн траншейăсем темиçе рет алтса тухнă, бетонран нумай вăхăтлăха пымалли укрепленисем нумай туса тултарнă, çав укрепленисенче персе тăмалли хатĕрсем çав тери нумай пулнă. Совет танкистчĕсемпе пехотинецĕсем, çавăн пекех тата наступлени тăвакан подразделенисемпе пĕрле пыракан артиллерин, çав тери хăвăрт тата хăватлă пырса çапса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та паян Кельце хулине туртса илнĕ. Кельце хули Польшăн администрацине хуçалăхĕн пысăк центрĕ тата çулсен паха узелĕ пулса тăрать. Кельце хулинче сипетмелли япаласем, хĕçпăшал тата пăрçа хатĕрĕсем тăвакан заводсем нумай. Кельце хулишĕн пынă çапăçура нимĕç çарĕсене питĕ пысăк çухату кӳнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, хулана пырса кĕмелли вырăнсенче кăна 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 40 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

Хмельник хулинчен хĕвеланăçнерехре те нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк резервĕсене куçарса пынă та çул çинчен тӳрех çапăçăва кĕртсе янă. Пирĕн çарсем гитлеровецсен контратакисене пурнĕ те сирсе янă, вара тăшмантан аякран иртсе кайса, çулсен пысăк узелĕ пулса тăракан Ендженов хули патне çурçĕр тата кăнтăр енчен пырса тухнă. Тăшман гарнизонĕ хирĕç тăнă, анчах та ăна часах аркатса тăкнă. Пирĕн çарсем ку районра нимĕç пехотин икĕ полкне вĕтерсе пĕтернĕ, 74 хир туппи тата темиçе вунă танкпа бронетранспортер пĕтерсе тăкнă.

Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе канăлма чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату тӳсет. Пирĕн çарсем наступлени туса пынă малтанхи икĕ кун хушшинче кăна, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 116 танкне, тĕрлĕ калибрлă 379 туппине, тĕрлĕрен вăрçă хатĕрĕсем турттарса пынă 1000 автомашинине ухăн, боеприпас тата çар пурлăх склачĕсене нумай тытса илнĕ.

* * *

Чехословакире, Лученец хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешекен пĕр соединени чăçĕсем вунă километр малалла кайнă та çулсен узелĕ пулса тăракан Мелехедь ялне туртса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, унтан ăнăçлă маневр туса, нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă. Тăшман каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли вырăнсем юлнă. Нимĕçсен 228-мĕш горнострелковăй полкне пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне ытла тытăпа илнĕ.

* * *

Будапештра пиçĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Будапешт варринчи урамсене гитлеровецсенчен тасатса пырса, пирĕн гварди пайĕсем хĕвеланăç вокзалне тытса илнĕ, тăшманпа Дунай шывĕнчен километртан та сывăхрах выртакан кварталсенче çапăçаççĕ. Дунай шывĕн сулахай хĕррипе кăнтăралла наступлени туса пыракан çарсем шыв хĕрринчи Фельше урамне тата вунă промышленность предприятине туртса илнĕ. Дунай шывĕн сулахай хĕррипе çурçĕрелле наступлени туса пыракан пирĕн ытти чăçсем нимĕçсене чылай кварталтан хăваласа кăларнă. Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен уйрăм ушкăнĕсем хăйсен хĕçпăшалне пăрахса тытăнма пăрăнаççĕ. Кун каçиччен пирĕн çарсем 7 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 4 бронетранспортер, 50 хир туппи (вĕсенчен çиччĕшĕ йывăр тупăсем) сиенленнĕ 12 самолет, 5 паровоз, 70 çӳлен çул вагонĕ, 766 автомашина, пулеметсем, автоматсем тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра нимĕçсен 68-мĕш пехотинăй дивизийĕнчи 188-мĕш полкран тытăпа лекнĕ обер-ефрейтор Вилли Гейнц çапла каласа кăтартнă: «Салтакăсем вырăссен наступленине питĕ хăраса кĕтсе тăратчĕç. Офицерсем пире пĕрмаях çапла калатчĕç: пирĕн позицисене питĕ вăйлă çирĕплетнĕ, пирĕн вăл позицисене темиçе пулсан та хамăр алăран ямалла мар, тетчĕç. Декабрĕн 18-мĕшĕнче машăн салтака пĕр хут листи вулаттарса, алă пуставса тухрĕç. Çав хут çинче çапла сырнă: «Командовани мана çапла пĕлтерчĕ: эпĕ выраççем енне куçсан, манăн пĕтĕм çемьене—аттене, аннене, арăма, ачасене тата ачасен ачисене те персе пăрахаççĕ». Салтакăсем питĕ тарăхса çитрĕç, çапах та пурте пĕр шарламасăр çав хут çине алă пусрĕç. Анчах та вырăс тупписем çĕмĕрни пиллĕк командовани хăратнинчен вилĕрех пулнĕ. Ку ĕнтĕ чăн-чăн тамăк пулчĕ. Ун пек хăрушă япалана эпир ку таранччен нихăçан та курман. Артиллери вут-хĕмĕ пире питĕ пысăк çухату кӳчĕ. Траншейăсенче ямăнă салтаксем вилнĕ салтаксемпе юнашар выртрĕç. Аманнисем хăйсене пулăшма йăлăнса чĕнчĕç, анчах та вĕсене пулăшу паракан никам та пулмарĕ. Салтакăсем хăшпĕрисем ухмăха ерчĕç. Вырăссем пире çав тери хăватлăн пырса çапрĕç. Хирĕç тăрасси çинчен шутлаканни никам та пулмарĕ».

Мускава Англи парламенчĕн делегацийĕ килнĕ

Енер, январĕн 15-мĕшĕнче, Мускава Англи парламенчĕн членĕсен делегацийĕ çитнĕ. Делегацире çак çынсем тăрăççĕ: Вальтер Эллиот (делеган пуçлăхĕ), Чарльз Понсонби, Маннингем Баллер, лорд Ловат, Джон Паркер, Томас Фрезер, лорд Фарингдон, Уилфред Робертс, П. В. Джеусон тата Стефен Кинг-Холл господинсем.

Вокзалта делегацие çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Верховный Совечĕн депутачĕсем В. А. Веснин, З. И. Сердюк тата В. А. Шадрин, Мускав хули Совечĕн Исполкомĕн Председателĕн Заместителĕ А. В. Астафьев тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем В. Я. Ерофеевпа Г. И. Фомин, çавăн пекех тата Великобритани Совет Союзĕнчи Ĕçĕсен поверенныйĕ Д. Бальфур господин. Вокзала Великобритани тата Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнине Шупашкарта уявлани

Январĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарти пионерсен çуртĕнче вырăссен аслă писателĕ А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул çитнĕ май чаплă лару пулса иртрĕ. Ларура рабочисемпе служащисем, писательсем, художниксем, артистсем, преподавательсемпе студентсем т. ыт. пулчĕç.

Ларăва Грибоедов уявне ирттерме тунă комиссин председателĕ А. Эсхель уçрĕ.

А. С. Грибоедовăн пурнăçĕпе творчестви çинчен Чăваш педагогика институчĕн преподавателĕ, филологи наукисен кандидачĕ И. Н. Сутягин тĕплĕ те пысăк доклад туса пачĕ.

Доклад хыçăн Чăвашсен Академиллĕ театрĕн артисчĕсем (Молодов, Ургалкин, Семенов, Филиппов т. ыт.) «Аса пула инкек» («Горе от ума») комедин иккĕмĕш пайне выляса пачĕç. Вырăс труппин артисчĕсем «Своя семья» комедин икĕ сыпăкне выллрĕç.

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС-ра

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС, РСФСР апат-çимĕç промышленноçĕн районсенчи тата хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомне виççĕмĕш премипа пама йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ВЫРАНТИ ТОПЛИВО ПРОМЫШЛЕННОСТЬ УПРАВЛЕНИ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТАВĔН 1944 ÇУЛХИ ДЕКАБРЬ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вырăнти топливо промышленность управлени предприятийĕсен вырăнти топливăна хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Улатăр вăрманпромхозĕ (директорĕ Горланов юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Вислобоков юлташ) плана вутă хатĕрлес енĕпе 110 процент, турттарас енĕпе 239 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Улатăр вăрманпромхозне памалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă рабочисене, инженерла-техникла работниксене премилеме 20 пин тенкĕ укçа панă.

Советски вăрманпромхоза (директорĕ Усов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Махинин юлташ) тата Йĕпреç вăрманпромхозне (директорĕ Гордеев юлташ) ăмăртура палăрнă рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилеме 10-шар пин тенкĕ укçа панă.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ФИНАНС ОРГАНĔСЕН 1944 ÇУЛХИ IV-мĕш КВАРТАЛТИ СОЦИАЛИЗМЛА АМĂРТАВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш республикинчи финанс органĕсен 1944 çулхи IV-мĕш кварталти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Сĕнтĕрвăрри районĕн финанс отделĕ (заведующийĕ Анкудинов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 116,9 процент тултарнă (23 тĕрлĕ доходран 21 тĕрлĕ доход енĕпе плана ирттерсе тултарнă). Сĕнтĕрвăрри районĕн финанс отделне Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 15.000 тенкĕ укçан преми памалла тунă.

Октябрьски районăн финанс отделĕ (заведующийĕ Егоров юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Херсонов юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 111 процент тултарнă. Октябрьски районăн финанс отделне 10.000 тенкĕ преми памалла тунă.

Вăрмар районĕн финанс отделĕ (заведующийĕ Яковлев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктимиров юлташ) укçа-тенкĕ пухмалли плана 110 процент тултарнă. Вăрмар районĕн финанс отделне 5.000 тенкĕ укçан преми памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн çавăн пекех пĕрлĕ кварталта Советски, Элĕк, Куславкка, Красноармейски, Шупашкар, Çĕрпӳ, Калинино, Елчĕк, Сĕнтĕр, Ишлей, Тăвай, Етĕрне районĕсенчи финанс отделĕсем тата Шупашкар хулинчи финанс отделĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана ирттерсе тултарнине палăртнă.

УКÇА-ТЕНКĔПЕ ЯПАЛАСЕН ТАВАТТАМĔШ ЛОТЕРЕЙИН БИЛЕЧĔСЕНЕ ВЫРНАÇТАРАС ĔÇРЕ МАЛА ТУХНĂ РАЙОНСЕНЕ ПРЕМИСЕМ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

Укçа-тенкĕпе япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене ялти халăх хушшинче ăнăçлă вырнаçтарнăшăн тата лотерея укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕшĕн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак районсене премилеме йышăннă:

Елчĕк районне—5 пин тенкĕ,
Ишлей районне—5 пин тенкĕ,
Çĕмĕрле районне—3 пин тенкĕ,
Шăхасан районне—3 пин тенкĕ

тата малтан йышăннă постановлени çумне хушса:

Шупашкар районне—4 пин тенкĕ,
Чурачăк районне—4 пин тенкĕ.

ВЦСПС-па СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳренĕн Хĕрлĕ Ялавне Йĕпреç МТС-не пани

ЙĔПРЕÇ, январĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Енер район центрĕнчи клуба машинăпа тракторăпа станцири трактористсемпе трактористкăсем, рабочисемпе служащисем, районри колхозсен, предприятисемпе учрежденисен представителĕсем пухăннă. 1941 çулхи ноябрь уйăхĕнче тракторсем юсамалли плана пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарассишĕн пынă ăмăртура мала тухнăшăн МТС-а ВЦСПС-па СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ. Çак пысăк награда пирĕн трактористсемпе трактористкăсене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Иртнĕ çул эпир вăрçă вăхăтĕнчи ответлăха туйса ĕçлерĕмĕр. Тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне 120 процент пурнăçланă, 12,5 тонна горючи перекетленĕ. Трактор ĕçĕн кăкне 10 процент йӳнетнĕ. Уйрăмăнах Яковлев ертсе пыракан трактор бригади çийĕсем евĕрлĕ пулнине палăртнă. Унта разведка тăвас шутпа темиçе шăтăк чавма шутланă. Шăтăксене 5.000 метр таран чавмалла. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

БЕЛОРУСС АЧИСЕМ ÇЕРШЫВА ТАВАРАНАÇÇĔ

1944 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ гитлерла тискеремсем тунă кирĕр ĕçсем çинчен пĕлтернĕччĕ. Фашистла çынсиенсем белорусс ачисем хыççăн хăваласа çӳренĕ. Нимĕçсем ялсене хупăрласа илнĕ хыççăн ачасене яра-яра илнĕ те вĕсене эшелонĕ-эшелонĕпе «донорсен» лагерĕне ăсатнă.

Ачасен пĕр пайне гитлеровецсем Польша çĕрне илсе кайнă пулнă, кунта вĕсем хулласемпе ялсем тăрăх сапаланса пĕтнĕ. Хăйĕн уполномоченнăйĕсем урлă Белорусси правительстви ачасене каялла тавăрас ĕçе организациленĕ. Республикăна паянхи кун тĕлне 3.000 ача тавăрнă. Вĕсем çав тери выçăхса çитнĕ, çĕтĕк-çатăк тăхăнтă, çара уран тăрса юлнă. Йышăнакан пунктсенче ачасене çĕнĕ кĕпе-йĕм параççĕ, лайăх апат ситереççĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсене цыпаса тупас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вĕлернĕ пирки ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасене ача çуртĕсене ăсатаççĕ. Нумай ачасене воспитани пама уйрăм рабочисем, колхозниксем, служащисем илеççĕ.

Брестри, Барановичри тата Столбцови больнийĕсенче чирлĕ тата выçăхса çитнĕ ачасене сыватма уйрăм отделенисем уçнă. (ТАСС).

ОСОАВИАХИМ СОВЕЧĔСЕН ПРЕДСЕДАТЕЛЕСЕН ПĔТЕМ СОЮЗРИ КАНАШЛАВĔ

Январĕн 12-мĕшĕнче Мускавра Осоавиахимăн союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи, нимĕçсенчен ирĕке кăларнă крайсемпе облаçĕнчи Совечĕсен председателĕсен Пĕтĕм Союзри канашлавĕ уçăлнă.

Осоавиахимăн Центральнăй Совечĕн Председателĕ авиаци генерал-майорĕ Кобелев юлташ хăйĕн малтанхи сăмахĕнче Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ĕçре осоавиахимовецсем пысăк выран йышăнса тăнăн çинчен, ирĕке кăларнă районсенче Осоавиахим организацийĕсен ĕçĕ хăвăрт лайăхланса пынăн çинчен каласа кăтартнă. Ун хыççăн Украинăн, Белорусси тата Воронеж облаçĕнчи Осоавиахим Совечĕсен председателĕсен докладсем итленĕ.

Канашлу 6 куна пырать. (ТАСС).

ЯЛКАЛАРИ ÇУРТ

Карели перешеекĕнче, Териокирен 16 километрта, Ялкала ятлă пĕчĕк ял ларать. 1917 çулта тытанса пурăннă чухне Владимир Ильич Разливри хӳшĕрен Ялкала ялне куснă. Çакăнта вăл Разливра çырмалли пуçланă «Государство и революция» ятлă кĕнекине малалла çырнă.

Вăрçă пуçланас умĕн Ялкалара музей уçнă пулнă. Фотографисем тăрăх тата курнă çынсем каласа панă тăрăх, Владимир Ильич пурăннă çуртăн ăшчикĕнче малтанхи пекех туса хунă. Илемлĕ яла çĕршер экскурсантсем пыра-пыра кайнă. 1941 çулта Ялкалана фашистла оккупантсем йышăннă. Захватчиксем çав çурта тата çурт çумĕнчи сада аркатса тăкнă. Музейри экспонатсене В. И. Ленин музейĕн филиалĕнче ĕçлекен работниксем вĕхăтра илсе тухса кайнипе вăл экспонатсем сыхланса юлнă.

Ялкалана ирĕке кăларнă хыççăн музее юсама тытăннă. Çурт таврашне тасатнă, çуртне йĕркеленĕ, музейри япаласене малтанхи пекех вырнаçтарса лартнă. (ТАСС).

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх

Пионерсемпе комсомолецсем вырăнти удобрени хатĕрлеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри колхозсем ҫитес ҫулхи вăйлă тырпулăн хĕрĕлĕ кĕрешĕве тухрĕç. «1-ое мая», «Спутник колхозника» «Сеятель», «Радио» колхозсем мĕнпур йышши вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа пĕтерсе, районри лабораторире тĕрĕслеттерчĕç. Вăрлăхсем лайăх шăтаççĕ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хирекĕ, ларомелли уйăхлăхăн ҫурри иртрĕ ĕнтĕ. анчах «Хĕрлĕ сухаҫ» колхозра нимĕн те тумаççĕ.

Колхозниксем, пушă вăхăтпа усă курса, агротехникăна вĕренме кăмăл тăваççĕ, анчах кружок организацилеме никам та шутламасть.

— Сураккиччен тем те тăвăпăр-ха,—тесе лăплантарать колхоз председателĕ И. Маскин юлташ. Анчах та ҫурăки ҫывхарать, вăл ҫавăнăҫусăр руководительсене кĕтсе тăмасть.

М. ВИССАРОВ.

ТИСЛĔК КАЛАРАССĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри чылай колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне Киров ячĕпе тăракан колхоз 47 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хире пурĕ 2100 лав тислĕк кăларнă. «Волна» колхоз 1254 лав тислĕк хире кăларнă, 15 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне районра мĕн пурĕ 28.330 лав тислĕк хире кăларнă, 648 центнер кĕл, 340 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

И. ОСИПОВ.

Плугсем юр айĕнче

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Новая жизнь» колхозра ҫуракине ҫителĕксĕр хатĕрленеҫ. Вăрлăхсене сортласа пĕтермен. Плугсемпе сӳресене юсама тытăнман. Вĕсем ҫаплипех юр айĕнче лараççĕ. Хăмăтсемпе ĕнерчĕксене юсасси ҫинчен те сахал шухăшлаççĕ. Конюхсен пĕртĕнче 1-мĕш бригадăн 9 хăмăт, 12 ĕнерчĕк, 2-мĕш бригадăн 11 хăмăт, 10 ĕнерчĕк, 3-мĕш бригадăн 8 хăмăт, 7 ĕнерчĕк юсавсăр выртаҫҫĕ. Хăмăтсен пăявĕсемпе, чӳлĕкĕсем сук. Ҫавăн пекех урапасем юсама та тытăнман. Колхоз председателĕ Я. Яшин юлташ ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе васкамасть. Ҫак вăхăта ҫитсе те ыйтăва колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явăн.

Н. ЯРАДАЕВ.

Сураккиччен тем те тăвăпăр-ха...“

Ҫĕмĕрле районĕнчи «Хĕрлĕ сухаҫ» колхозра, ҫуркунне акма кирлĕ вăрлăхсем ҫителĕклĕ, анчах та вĕсене сортласа тасатман. Ялхуҫалăх машинисемпе плугсене юсама тытăнман. Ут тавраш̆ĕсемпе транспрот инвентарĕ ҫителĕксĕр, пуррисем юсавсăр.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хирекĕ, лармалли уйăхлăхăн ҫурри иртрĕ ĕнтĕ. анчах «Хĕрлĕ сухаҫ» колхозра нимĕн те тумаççĕ.

Колхозниксем, пушă вăхăтпа усă курса, агротехникăна вĕренме кăмăл тăваççĕ, анчах кружок организацилеме никам та шутламасть.

— Сураккиччен тем те тăвăпăр-ха,—тесе лăплантарать колхоз председателĕ И. Маскин юлташ. Анчах та ҫурăки ҫывхарать, вăл ҫавăнăҫусăр руководительсене кĕтсе тăмасть.

М. ВИССАРОВ.

ТИСЛĔК КАЛАРАССĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри чылай колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне Киров ячĕпе тăракан колхоз 47 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хире пурĕ 2100 лав тислĕк кăларнă. «Волна» колхоз 1254 лав тислĕк хире кăларнă, 15 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне районра мĕн пурĕ 28.330 лав тислĕк хире кăларнă. 648 центнер кĕл, 340 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

И. ОСИПОВ.

Плугсем юр айĕнче

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Новая жизнь» колхозра ҫуракине ҫителĕксĕр хатĕрленеҫ. Вăрлăхсене сортласа пĕтермен. Плугсемпе сӳресене юсама тытăнман. Вĕсем ҫаплипех юр айĕнче лараççĕ. Хăмăтсемпе ĕнерчĕксене юсасси ҫинчен те сахал шухăшлаççĕ. Конюхсен пĕртĕнче 1-мĕш бригадăн 9 хăмăт, 12 ĕнерчĕк, 2-мĕш бригадăн 11 хăмăт, 10 ĕнерчĕк, 3-мĕш бригадăн 8 хăмăт, 7 ĕнерчĕк юсавсăр выртаҫҫĕ. Хăмăтсен пăявĕсемпе, чӳлĕкĕсем сук. Ҫавăн пекех урапасем юсама та тытăнман. Колхоз председателĕ Я. Яшин юлташ ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе васкамасть. Ҫак вăхăта ҫитсе те ыйтăва колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явăн.

Н. ЯРАДАЕВ.

Колхоз ҫирĕпленсех пырать

Шăхасан районĕнчи «Соревнование» колхоз иртнĕ ҫулсенче юлса пынă. Ун тислĕпе ытти имҫамсем тăкманшăн пуля тата пусуҫавăнăшне пăхăнса пыменшĕн пуля, кунта тырпул ытла та япăх пулнă. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчĕтмелли план та пурнăҫа кĕрсе пыман. Ҫаксем пирки ĕнтĕ колхоз кӳршĕри колхозсенчен 2.000 пăт ытла тырă кивҫен илнĕ.

Колхозра ĕç дисциплини пулман. Ĕç нормисене сĕнетмен. колхозниксем ҫулсеренех ĕçкунĕсем ҫине тырă илеймен.

Колхоз председателĕ пулса Исаев юлташ ĕçлеме тытăнсан, чăн малтанах, колхозри ĕçе тĕрĕс организацилесси ҫине, кадрсене йĕркеллĕ выпрастарса тухасси ҫине тимлĕн ҫавăнса пăхнă.

Бригадирсем пулса ĕçлеме ҫĕнĕрен В. Ивановпа С. Сидоров юлташсене суйланă. Вĕсем колхозри пысăк опытлă ҫынсем пулнă. Вылăх-чĕрлĕхсене пăхма та ĕçе юратакан колхозниксене уйăрса партнă Отечественнăй вăрçă инваличчĕ Д. Никифоров юлташ—ферма пуҫлăхĕ, К. Иванов юлташ аслă конюх пулса ĕçлеме тытăнă.

Колхоз председателĕ уйрăм участокселпе ĕçлекен ҫынсен ĕçĕсене яланах тĕрĕслесе пынă. Правленин ларăвĕсенче вĕсен ĕçĕсем ҫинчен сӳтсе-явнă.

1944 ҫулта «Соревнование» колхоз ҫуракине срокра тата агротехника кăтартнă пек пахалăхлăн туса ирттернĕ. Ҫуллахи вăхăтра тырпула аван пăхнă. Сумкураксене пĕтĕмпех тасатнă.

Кунта, ҫапла вара, ҫурхине кĕрхи тырăсем уҫҫенхи ҫулхинчен ытларах пулчĕç. 1944 ҫулта кашни гектартан ыраш 84 пăт, ҫурхи тулă 102 пăт, урпа 81 пăт, сĕлĕне пĕри 60-шар пăт, кĕрхи тулă 108 пăт таран пухса илнĕ Иванов ертсе пыракан бригадăн тырпулĕсем уйрăмах лайăх пулчĕç. Унăн бригади кашни гектартан вăтам шутпа 85 пăт тĕштырă туса илнĕ.

Ҫавăн пекех пахча-ҫимĕç енĕпе ĕçлекен бригада та авăн тĕслĕхсем кăтартать. Ун бригадирĕ—вăтă колхозник Т. Андреев юлташ. Колхозниксем тăвăнса ĕçленине пуля, купăста, кишĕр, помидор тата ытти ҫимĕçсем аван пулчĕç. Ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене ҫĕрулми 700 грамм, купăста 600 грамм, кишĕр 100 грамм, помидор 100 грамм валеҫсе панă.

1944 ҫулта колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те вăхăтра парса татнă. Хĕрлĕ Ҫар фондне планран ирттерсе тырă 500 пăт, ҫĕрулми 75 пăт хывнă. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчĕтмелли плана та колхоз пĕтĕмĕшпех тултарнă. Сĕт, ҫамарта та та ҫăм унҫҫенхи ҫулсенчинчен нумай ытларах илнĕ Государствăна вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем пăмалли плана ытлашшипех тултарнă. 1945 ҫулхи план тăрăх государствăна сĕт аванс шучĕне 1000 литра яхăн панă. Епесĕр колхозниксен семьисене пулăшас майпа вĕсене сĕт парса тăнă.

Вылăх-чĕрлĕх усрамалли ҫуртсем ăшă та таса. Фермăра ĕçлекенсем ҫамрăк вылăхсене усрамалли ҫуртсене хăйсемех юсанă. Вылăхсем валли ҫителĕклĕ таран тĕштырă, утă, силос, ҫĕрулми, вылăх кăшманĕ, ҫулҫă хатĕрлесе хунă.

— Пирĕн вылăхсем самăр та тутă,— тет ферма заведующийĕ Никифоров юлташ.—Ситес ҫул колхозниксене ҫу та валеҫсе пама шутлатпăр. Кăçал ĕçкунĕ пуҫне 25-шер грамм ҫăм валеҫетпĕр. 1944 ҫулта кашни сăвакан ĕнерен 1000 литр сĕт илнĕ пулсан, 1945 ҫулта 1200 литра сĕт илме ĕмĕтленетпĕр.

Колхозниксен пурнăҫĕ аванлансах пырать. Колхозниксем кашни ĕçкунĕ ҫине кăçал 3-шер килограмм тырă илеççĕ. Ҫапла А. Данилова ĕçкунĕсем ҫине 100 пăт, П. Андреев 200 пăт ытла, А. Никифоров 78 пăт, П. Николаева 84 пăт тырă илеççĕ.

«Соревнование» колхоз ҫирĕпленсех пырать. Иртнĕ ҫулта колхоз 14 стан ҫĕнĕрен урапа илнĕ. Ҫунасем, ут тавраш̆ĕсем, ҫителĕклĕ те юсавлă. 1944 ҫулта колхоз шыв арманĕ лартрĕ. Колхозăн ялхуҫалăх машинисем сахал пулнă. Халĕ плугсем, тимĕр сӳресем ҫителĕклĕ. Аван ҫапмалли машина пур тата тепĕр молотилка илме килĕшнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, колхоз малалла ataланса пыни колхозниксем фронтри пек ĕçлеме вĕренсе ситиничен килет. Колхозра халĕ 1945 ҫулхи ҫуракине хатĕрленес ĕç хĕрĕллĕн пырать. Уя тислĕк турттараççĕ, тырăсем сортласçĕ.

— 1945 ҫулта кашни гектартан 100-шер пăт тырă туса илмелле, фронтра тăвăн ҫĕршыва ялхуҫалăх продукчĕсем татах та ытларах памалла, ҫак пулать пирĕн тĕп задача. Ана ăнăçлăн пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ырми-канми, ăмăртса ĕçлеççĕ,—тет колхоз председателĕ Исаев юлташ.

А. АНТОНОВ.

40 ҫул хушши учитель ĕçĕнче

Хĕрĕх ҫул каярах Крымзарайка ялĕнчи (Элĕк районĕ) чиркӳ прихут шкулĕнче ҫамрăк учительница Христина Дмитриева Дмитриева ĕçлеме тытăннă. Ҫавăнтанпа вăл ҫамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе 40 ҫул хушши пĕр чарăнмасăр ĕçлет.

1918 ҫулта Х. Д. Дмитриева хăйĕн тăван ялне—Ишеке-куҫать Кунта вăл пуҫламĕш шкулта вĕрентсе пурăнать, унтан ҫав шкулăн заведующийĕ пулса ĕçлет. 1936 ҫулта Ишекре вăтам шкул уҫăлсан, вăл ҫав шкулта пуҫламĕш классенче ĕçлеме тытăнса, ăна халичченех ĕçлесе пурăнать.

Ишек ял Советĕнчи ĕçсăмсăрсем ăна 1938 ҫулта ял Совечĕн депутатне суйлаҫçĕ. Дмитриева юлташ ĕçсăмсăрсем шанса панă хисеплĕ ĕçе тивĕçлипе туса пырать. Ялта политикăлла-массăлла ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлет.

Ачасене лайăх вĕрентесси тата коммунистла воспитани парасси—учительшĕн пĕрремĕш тивĕç пулса тăрать. Ҫак пысăк ĕçе тивĕлипе пурнăҫлассишĕн Христина Дмитриевна пĕр канма пĕлмесĕр ĕçлет. Ишек ялĕнчи шкулта вĕренме ҫул ҫитнĕ ачасене пĕтĕмпех вĕренĕве явăҫтарнă. Вĕсем шкула йĕркеллĕ ҫӳреççĕ. Христина Дмитриевна ĕçлекен классене ачасен кăмăлне каймалла илемлетнĕ. Кунта чечекпе ешĕреççĕ. Стенасем ҫинче уроксене вĕренме пулăшакан ӳкерчĕксем, таблицăсем, карттăсем пур. Уроксене Христина Дмитриевна ачасем интереслемелле иртерет. Ачасене сăмахпа каласа ҫеç мар, тĕрлĕ опытсем туса кăтартса вĕрентет Ҫавăнпа та вăл вĕрентекен ачасем лайăх вĕренсе пыраççĕ, класран класа аҫаҫлĕн куҫаççĕ. Ачасем хушшинчи дисциплина та лайăх, вĕсем таса тумланнă, пионер галстукĕсене тирпейлĕн ҫакнă. Хăйсенчен аслăраххисене курсан, яланах хисеп туса пионерла салют параççĕ, сывлăх сунаççĕ.

Христина Дмитриевна вĕрентсе кăларнă ачасенчен нумайĕшĕсем ĕнтĕ пысăк ҫынсем пулса ĕçлеççĕ. М. Степанов, М. Родионов, Г. Миронов юлташсем, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă хыççăн, халĕ учительсем пулса ĕçлеççĕ. Петр Осипов, С. Ильин юл. ташсем, Хĕрлĕ Ҫар офицерĕсен ячĕсене илнĕскерсем, немĕç захватчикĕсене хирĕç паттăрлăн ҫапăҫаççĕ. Хăшпĕрисем тата инженерсемпе врачсем пулса ĕçлеççĕ.

Ишекри колхозниксемпе колхозницăсем Христина Дмитриевнăна юратаççĕ, хисеплеççĕ.

Учителĕн пархатарлă ĕçне пирĕн ҫĕршыври пек ихăш ҫĕршывра та пысăка хурса хакламаççĕ. 1940 ҫулта Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Христина Дмитриевна Дмитриева юлташа Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ тата Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕн ятне панă.

П. АРБАТОВ.

ЛИТВАРИ ХАЛĂХ УНИВЕРСИТЕЧĔСЕМ

Каунасра Рокишкис уезд центрĕнчи Литвара пирвайхи халăх университечĕсем уҫăлнă. Кассенче вăл университетсене предприятисемпе учрежденисенче ĕлекен рабонисемпе служащисем пухăнаççĕ. Унта вĕсем наукăпа культурăн тĕрлĕ енĕсене вĕренсе пыраççĕ. Январьте тата тепĕр вилĕ халăх университечĕ уҫăлмалла. Вĕсем Вильнюсра, Мариямполе тата Кедайняйра уҫăлаççĕ. Ҫавăн пек университетсем кăмăл мĕн пурĕ 13 уҫăлмалла. (ТАСС).

ГРИБОЕДОВ ЯЧĔПЕ ТУХНА ПОЧТА МАРКИСЕМ

А. С. Грибоедов ҫуралнăранпа 150 ҫул тултарнă тĕле СССР Сыхăну Халăх Комиссариачĕ икĕ тĕслĕ почта марки кăларнă. Маркăсем 30 пус тата 60 пус тăраççĕ. Вăл маркăсем ҫине аслă писателĕн сăнне пичетленĕ. (ТАСС).

Ленин кунĕсем умĕн тата Ленин кунĕсенче вуламалли лекцисен, докладсен тата калаҫусен Темисем

1. 21 ҫул Ленинсăр, Сталин ертсе пынипе. Ленин ҫулĕпе.

2. Ленин—большевиксен партийĕпе Совет государствин организаторĕ тата ҫулпуҫĕсем.

3. Ленинпа Сталин—Хĕрлĕ Ҫăран организаторĕсем тата ҫулпуҫĕсем.

4. Ленинпа Сталин—Совет Союзĕнчи социализмлă строительствăна хавхалантаракансем тата унăн организаторĕсем.

5. Халăхсене пĕр-пĕринпе туслăн пурăнма вĕрентекен Ленинпа—Сталинла идеологи фашизмăн тискер кайăкла идеологине ҫĕнтерни.

6. Фашистла немĕç захватчикĕсене тытăклăн ăркатса тăкас тата Совет державине хăватне татах та ытларах ӳстерес тĕлĕшпе совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Хĕвеланăҫ Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре ҫапла каланă: Арден саваллĕн ҫурҫĕр флангĕнче, Ставлопа Мальмедирен кăнтăртарахра, тăшман хирĕç тăрса ҫапăҫасси вăйланнă.

Союзниксем Монлебена тăшмантан тасатнă, Уфализпа Шеран хушшинчи ҫула тытнă. Ларошпа Бертонь хушшинчи ҫултан хĕвеланăҫнерехре тăшман чăсĕсене пĕтерсе ҫăкас тĕлĕшпе ҫапăҫнă.

Союзниксен разведка тăвакăн патрулĕсем Урт шывĕ хĕррине тухнă та савăлăн кăнтăр флангĕнче кĕрешекен союзниксен патрулĕсемпе ҫыхăннă.

Бастоньрен ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре союзниксен чăсĕсем, тăшман ытла вăйлах мар хирĕç тăрса ҫапăҫнине сирсе ярса. Бертоне йышăннă та унтан икĕ мильăра Урт шывĕ хĕрринче лараканскер пĕр пункт патне сывхарнă. Пăртак хĕвелтухăҫнерех союзниксем Новиле пырса кĕнĕ, Мажеҫыҫĕнче пĕр миля таран малалла кайнă. Вильцран кăнтăр-хĕвеланăҫнерехри пĕр ҫӳллĕ вырăнта союзниксем ҫĕнĕ ҫитĕнӳ тунă.

Ремихран кăнтăр-хĕвелтухăҫнерехре, Германи ҫучĕсем персе пăрахмалли приговорсем ыйшанаççĕ

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Германире гитлерла судсем сĕнĕрен персе пăрахмалли приговорсем нумай йышăннă. Гамбургпа Штеттин хулисенче кăна сăтăр тăнăçăн тата ют сĕршывсенчи радиона пăртăк итленĕшĕн тăвата сынна персе пăрахмалла тунă. Германин юстици министерствин «Рейхсгезетцблатт» хаçатĕнче гитлерла юстици министрĕн Тиранăн статьине пичетлесе кăларнă. Сав статьăра ҫапла каланă: Германире 1941 ҫулта 1.292 сынна, 1943 ҫулта 5.886 сынна персе пăрахмалла тунă.

Югославири ҫапăҫусем

БЕЛГРАД, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх ҫарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăҫ Боснире, Савăран кăнтăртарахри секторта, Югослави ҫăсĕсем наступлени туса пынă, хаярран ҫапăҫнă хыççăн Соколацпа Власеница хушшинчи ҫул ҫинчи Хан Пиесака йышăнса илнĕ. Челич—Корай секторĕнче немĕҫсен атакисене пурне те сире-сире пăрахнă. Санджакра, Лим улăхĕнче, Югославири ҫăсĕсем Прибой хулине ирĕке кăларнă, ҫапла вара Санджакăн пĕтĕм территорине тасатса ҫитернĕ. Вишеград патне чакакан тăшмана хăваласа пыраççĕ.

Хорватире, Банова—Ярута—Беловар районĕнче, Чазма шывĕн тури пайĕнче тăшман наступлени пусласа янă, унта халь тăшман чăсĕсене хирĕç хаяр ҫапăҫусем пыраççĕ.

ЮГОСЛАВИ КОРОЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави королĕн Лондонри канцелярийĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Вăл пĕлтерӳре Югославире вăхăтлăх власть организацилесси ҫинчен Шубашич премьер-министрпа Броз Тито маршал 1944 ҫулхи кĕркунне тунă килĕшӳ пирки каланă. «Югослави королĕ II-мĕш Петр,—тенĕ пĕлтерӳре,—Югослави правительствин премьер-министрĕ Шубашич докторпа Югослави халăхĕн ирĕклĕх юхăмĕн председателĕ Тито маршал хатĕрленĕ килĕшӳ проектне тĕплĕн пăхса тухнă Король ҫав килĕшӳве икĕ ыйту тăвăх хирĕçленĕ. Король хирĕçлекен ыйтусем вĕсем ҫаксем: Югославин государство йĕрки мĕнле пулмаллине учредительнăй собрани тата париччен ĕçлеме регентство туса хурасси тата фашизма хирĕçле вечене вăй хатăлăха законсем кăларакан орган вырăнне хурса шутласси. Король ҫак ыйтусене хирĕç пулни, тĕрĕссипе каласан, Шубашичпа Тито тунă килĕшӳ проектне йышăнманни пулать.

Югослави королĕн пĕлтерĕвне Англи печатĕ критиклет. Король пĕлтерĕвĕ пирки «Таймс» хаçат ҫапла ҫырать: Титопа Шубашич тунă килĕшӳве хирĕç пысса, Петр король «пĕрремĕшĕнчен, вăл сĕнӳсем вăхăтлăха кăна пулнине шута илмен, иккĕмĕшĕнчен, Югославири лару-тăрăва йăнăш хакланă», тенĕ.

«Таймс» малалла ҫапла ҫырать: паянхи кунăн та, пуласлăхăн та Югославире ялан лăх власа хăвăртрах туса хунă тата вăл власа союзниксен тĕп правительствихăнтарнă. Январĕн 13-мĕшĕнче Белград хулин урамĕсенче хăй тĕллĕнех демонстрацисем пуҫланса кайнă, вĕсем ҫĕрĕпех пынă. Паян ирхине те демонстрацисем пулса иртнĕ. Ҫĕршывăн ытти пайĕсенче те пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ.

БЕЛГРАДРИ ДЕМОНСТРАЦИ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пĕлтерет: Югославирен радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Шубашичла Тито маршал тунă килĕшӳве Петр король йышăнманни тата ҫав килĕшӳве йышăнманни ҫинчен король пĕлтерни Белградра тата пĕтĕм Югославире хытă хумханнă. Январĕн 13-мĕшĕнче Белград хулин урамĕсенче хăй тĕллĕнех демонстрацисем пуҫланса кайнă, вĕсем ҫĕрĕпех пынă. Паян ирхине те демонстрацисем пулса иртнĕ. Ҫĕршывăн ытти пайĕсенче те пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ.

Греципи лару-тăру

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаҫĕр тинĕс тавраш̆ĕнчи хĕспăшаллă вăйăсен штабĕн пĕлтерӳĕнче каланă тăрăх, Грецире Афины хулинчен сурҫĕртерехон тата сурҫĕр-хĕвеланăҫнерехри района тасатса пынă. Унта хĕспăшалла боеприпассем нумай тупнă. Грецин ытти районĕсенче—лăпкă.

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС) Паян Кайтăрла Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Грецире 0 сехет те 01 минутра перемири пуҫланнă хыççăн ăста та пулăшăпăла тытса сапăçни ҫинчен калакан пĕлтерӳсем ҫук. ЭЛАС сарăсем, перемири килĕшӳвĕнче палăртса хунă тăрăх. Афины хулинчен 70—100 миля тата Салоникăран 20 миля аякка каяççĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ЛЕЙБОРИСТСЕН ДЕЛЕГАЦИНЕ ЙЫШАННА

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль паян лейбористсен партин лидерĕсен делегацине йышăннă. Делегаци Черчилле Грецири лару-тăру ҫинче мĕнле пăхни ҫинчен хăйĕн шухăшне каласа пама шутлать. Делегаци составне Артур Гринвуд, Ласки профессор, Гриффитс тата Эньюрин Бивен кĕреççĕ.

ГЕРМАНИ СУЧĔСЕМ ПЕРСЕ ПАРАХМАЛЛИ ПРИГОВОРСЕМ ЙЫШАНАÇСЕ

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Германире гитлерла судсем сĕнĕрен персе пăрахмалли приговорсем нумай йышăннă Гамбургпа Штеттин хулисенче кăна сăтăр тăнăçăн тата ют сĕршывсенчи радиона пăртăк итленĕшĕн тăвата сынна персе пăрахмалла тунă. Германин юстици министерствин «Рейхсгезетцблатт» хаçатĕнче гитлерла юстици министрĕн Тиранăн статьине пичетлесе кăларнă. Сав статьăра ҫапла каланă: Германире 1941 ҫулта 1.292 сынна, 1943 ҫулта 5.886 сынна персе пăрахмалла тунă.

ЛАПКА ОКЕАН ҪИНЧИ ВАРҪА

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăҫ пайĕнчи хĕспăшаллă вăйăсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ ҫапла пĕлтернĕ: Америка ҫарĕсем Лусон утравĕнче (Филиппин), 9 миля малалла кусса, ҫĕнĕрен чылай пунктсем йышăннă. Япони ҫарĕсем вăйлах хирĕç тăман.

ВАШИНГТОН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, авианосецсем ҫинчен вĕçсе хăтăракан Америка самолечĕсем Франци Индокитайĕнчи Сайгонпа Камран бухти хушшинче Япони суднисене атакăланă.

Штабăн юлашки пĕлтерĕвĕсем тăрăх, Америка карапĕсем Японин Сайгонран Лусон утравĕ патне ҫитсе каякан караванне ярса тытнă.

ТОКИО, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лусон утравĕ ҫинче Америкăн шутлăха вăйăсене хирĕç хаяр ҫапăҫусем пыраççĕ.

ПĔЛТЕРӲ

Январĕн 19-мĕшĕнче, кăсхине 7 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче ҫуртĕнче (Ленинградски урам, 1) МОПР членĕсен хулари виҫĕмĕш конференцийĕ ҫӳлать.

Кун йĕркинче: 1) МОПР горкомĕне ревизи комиссийĕн отчечĕсем. 2) МОПР хула комитетне, ревизи комиссине тата МОПР-ăн обласри 6-мĕш конференцине кайма делеватсем суйласси; 3) Тĕнчери лару-тăру ҫинчен доклад.

МОПР горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сыхăну Халăх Комиссариачĕн Шупашкартри линипе техника узелĕн коллективĕ сыхăнăвăн 66-мĕш линия участокĕн начальникĕ

Осип Николаевич НИКОЛАЕВ

январĕн 15-мĕшĕнче вилни ҫинчен тата унăн ҫемьипе пĕрле хурланни ҫинчен пĕлтерет.

Комсомолăн пуҫламĕш организаци секретарĕ— ҫамрăксен вожакĕ

Комсомолăн пуҫламĕш организаци секретарĕ ҫамрăксен вожакĕ, организаторĕ пулса тăрать. Вăл—комсомолецсемпе ҫамрăксен ҫывăх юлташĕ. Комсомол организацин авторитечĕпе ĕçĕ секретарьтен нумай килет. Лайăх секретарь комсомолецсене лайăх пĕлет, комсомолецăн чун-чĕрипатне пыракан майсене тупма пĕлет, кашни комсомолеца ĕçе явăҫтарать. Ҫавăн пек секретарьсене комсомолецсем темиçе ҫул иртсен те, шкул ачисем хăйсен юратнă учительне асра тытнă пек, юратса асăнаççĕ. Пачах урăхла, комсомол организаци умĕнче ĕç ҫине сӳрĕккĕн пăхакан, ертсе пыма пĕлмен секретарь тăрать пулсан, темĕн чухлĕ лайăх решени йышăнсан та ĕç ăнмасть.

Акă, тĕслĕхрен Шупашкарти Водосветри пуҫламĕш организаци ĕçне тишкерсе тухар. Унта секретарь пулса Суркова юлташ ĕçленĕ. Вăл час-часах комсомолецсем активлă мар тесе ӳпкелешнĕ.

— Аптрамалла пирĕн комсомолецсемпе,—тенĕ вăл,—член укçине вăхăтра тӳлемеççĕ, пухусене ҫӳремеççĕ. Ывăр пирен халăхпа ĕçлеме...

Анчах айăпĕ унта комсомолецсенче мар, Сурковăра хăйĕнче пулнă. Вăл комсомолецсемшĕн руководитель пулман. Ҫавăн пирки те ăна ĕçрен кăларсан, комитет секретарĕ пулма Новикова комсомолкăна суйланă. Ҫĕнĕ секретарь—урăхла руководитель. Вăл ĕçлеме юратакан, хастарлă ҫын Вăл ĕçлеме тытăннăран вара организаци ĕçĕ те пĕтĕмпех лайăхланнă. Пухусем вăхăтра ирттерĕç, комсомолецсем член укçине те срокра тӳлеççĕ, вĕсен активлăхĕ те ӳснĕ, вĕсем производствăра та хастарлăх ĕçлеççĕ.

Пирĕн республикăра комсомолăн пуҫламĕш организацисен секретарĕсем пулса 2.322 ҫын ĕçлеççĕ. Вĕсем—комсомолăн кĕçĕн командирĕсем. Вĕсенчен чылайĕшĕ — комсомол ĕçĕнче ҫĕнĕ тата ҫамрăк ҫынсем. Секретарьсенчен ҫуррине яхăн—20 ҫула ҫитнĕ хĕрачасемпе арҫын ачасем. Ҫавăнпа та вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе райкомсемпе хула комитечĕсен тивĕçлĕн ĕçлени кирлĕ. ВЛКСМ райкомĕсем ҫавна пурте шута илмеççĕ-ха. Хĕрлĕ Чутай районĕнче секретарьсемпе инструкциллĕ семинарсем ирттермеççĕ. Элĕк тата Куславкка районĕсенче те секретарьсене воспитани парас тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕçлеççĕ. Хăшпĕр ҫĕрте тата сулăлав вăхăтĕ ҫитиччен тĕрлĕрен сăлтавсемпе секретарьсене ĕçрен хăтараççĕ, ҫĕнĕрен ҫынсем суйлаççĕ. Ҫĕрпӳ районĕнче кăçал ултă уйăх хушшинче 87 секретарьтен 45-шĕ, Ҫĕмĕрле районĕнче 68 секретарьтен 65-шĕ улшăннă. Ертсе пыракансем ҫакăн пек час-часах улшăнни ҫамрăк кадрсене тĕрĕс воспитани парас ĕçре пысăк чăрмав кӳрет. Секретарьсене час-часах улăштарман организацире пур ĕçсем те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. ВЛКСМ райкомĕсем вара ҫавна асра тытмаççĕ. Чылай секретарьсем ĕçрен тухнă чухне ĕç хучĕсене актпа памаççĕ, комсомол пухăвĕнче хăйсен ĕçĕсем ҫинчен отчет тумаççĕ. Ҫавăн пирки вара организацисен ĕçĕнче ответсăрлăхпа йĕркесĕрлĕх пуҫланса каять. Комсомолецсем ĕçри ҫитменлĕхсене вăхăтра критиклеймеççĕ. Комсомолăн Ҫĕмĕрле райкомĕ кăçал 6 уйăх хушшинче хăйĕн бюровĕнче 9 секретарĕн отчетне итленĕ. Вĕсенчен 5-шне ĕçрен хăтарса хыттăн ятласа хăварнă. Етĕрне районĕнчи «Победа» колхозра Денисова юлташ 7 уйăх ҫеç пуҫламĕш организацин секретарĕ пулса ĕçленĕ. ВКЛСМ Етĕрне райкомĕ ҫав вăхăтра Денисова юлташăн отчетне 4 хутчен бюрора итленĕ. Кашничех ăна ятласа хаварнă. Юлашкинчен вара «Комсомол ĕçне япăхтарса янă» тесе комсомолтан кăларнă.

Асăннă фактсем хăшпĕр комсомол райкомĕсем пуҫламĕш организацисен секретарĕсене тĕрĕс воспитани пама пĕлменни ҫинчен калаҫçĕ. Вĕсем ҫамрăк секретарьсене пулăшса, вĕрентсе пырас вырăнне ĕçрен аякката парăççĕ.

1935 ҫулта ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пленумĕнче Андреев юлташ кадрсем час-часах улшăнни пирки ҫапла каланăччĕ: «Ертсе пыракан кадрсем час-часах улшăнса тăни пур енчен те сиенлĕ: хуҫалăх ĕçне е политикăлла-организациллĕ ĕçе тата ытти ĕçсене те тивĕçлипе ертсе пыма чăрманаҫа пырать. Ҫавăн пек пулнă чухне опытлă кадрсем хатĕрлеме çук».

Андреев юлташăн кăтартăвне яланах асра тытса, ҫамрăк кадрсене час-часах, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куҫарассине пĕтермелле. Секретарьсене тĕрĕс воспитани парса, вĕсене нумай вăхăт хушши пĕр вырăнта ĕçлемелле тăвасси — комсомолăн ялăнхи ответлă задачи пулса тăрать. Ҫавна пурнăҫласан ҫеç эпир пуҫламĕш организацисене ҫирĕплетме пултаратпăр.

Хĕл пуҫланнăранпа вăхăт нумай иртрĕ ĕнтĕ.